*Алран кайми аки-сухи, асран кайми атти-анни...*

37 (2624) [1]
Хакĕ ирĕклĕ

# Хресчен сасси

2016
авăн
22

1991 çулхи ака уйăхĕн 21-мĕшĕнче тухма тытăннă

КĔÇНЕРНИКУН

СУЙЛАВ – 2016

# Пуласлăха шанса

**Иртнĕ эрне çĕршывшăн, республикăшăн пĕлтерĕшлĕ, яваплă пулăмпа палăрса юлчĕ: РФ Патшалăх Думин тата Чăваш Енĕн Патшалăх Канашĕн çĕнĕ йышĕсемшĕн сасăларăмăр.**

Суйлава халăх яланхи пекех хастар хутшăннă. Хăйсен кăмăлне каякан партисемпе кандидатсемшĕн сасăланă. Суйлав комиссийĕнче 8000 ытла çын ĕçленĕ, вĕсен ĕçне 6000 сăнавçă тĕрĕслесе тăнă. Çак кун ЧР Общество палатинче «хĕрӳ лини» ĕçленĕ. Кăçал суйлав ĕçне ЧР Çын прависене хӳтĕлекен уполномоченнăй представительстви пĕрремĕш хут хутшăннă. Чăваш Енре çавăн пекех Европăри хăрушсăрлăх организацийĕн (ОБСЕ) представителĕсем те килнĕ. Суйлав пысăк пăтăрмахсемсĕр иртнĕ.

ЧР Тĕп суйлав комиссийĕн ертӳçи Александр Цветков пĕлтернĕ тăрăх – сасăлава халăхăн 62 проценчĕ хутшăннă. Малтанхи кăтартусем çаплах: «Единая Россия» партишĕн çынсен 53 проценчĕ суйланă, КПРФ, ЛДПР тата «Справедливая Россия» партисемшĕн – 10-15 процент. Пур суйлав округĕнче те «Единая Россия» парти представителĕсем нумайрах сасă пухнă. Çак кăтарту ертсе пыракан влаçа, çĕршыв Президентне Владимир Путина халăх шаннине пĕлтерет. Апла пулсан вăл тĕрĕс суйлав туса малашлăхшăн сасăларĕ.

Ял халăхĕ те суйлава хастар хутшăннă. Ку тĕлĕшпе Патăрьел (89,08 процент), Комсомольски (80,27 процент), Елчĕк (89,78 процент), Шăмăршă (78,68 процент), Муркаш (77,02 процент), Вăрмар (76,31 процент), Вăрнар (73,60 процент) районĕсем маттур пулнине палăртмалла.



Авăн уйăхĕн 20-мĕшĕнче ЧР Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев РФ Федераци Пухăвĕн Патшалăх Думин депутачĕсен кандидачĕсемпе – сасăлавăн малтанхи кăтартăвĕсемпе мала тухнăскерсемпе – Патшалăх Думин Вĕренӳ енĕпе ĕçлекен комитечĕн председателĕн заместителĕпе Алена Аршиновăпа, Шупашкар хулин пуçлăхĕпе – депутатсен Шупашкар хула пухăвĕн председателĕпе Леонид Черкесовпа, ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕпе Олег Николаевпа курнăçнă. Патшалăх Думин Экономика политики, инноваци аталанăвĕ тата предпринимательлĕх енĕпе ĕçлекен комитечĕн председателĕ Анатолий Аксаков Мускавра пулнине кура килеймен.

Михаил Игнатьев суйлав уçă, конкурентлă никĕс çинче иртнине çирĕплетнĕ, политика кĕрешĕвне хутшăннă кандидатсене тав тунă, малашне те Чăваш Ен халăхĕн ырлăхĕшĕн пĕрле ĕçлемеллине пĕлтернĕ.

Олег Николаев Патшалăх Думипе тата Чăваш Ен Правительствипе пĕрле халăх пурнăçне лайăхлатас енĕпе çыхăннă ыйтусене татса пама хатĕррине палăртнă. Алена Аршинова республикăн влаç органĕсемпе конструктивлă майпа çыхăну тытса ĕçлессине малалла тăсассине çирĕплетнĕ. Леонид Черкесов суйлавçăсен чылай наказне пурнăçлассине кăçалхи ĕç планне кĕртнине каланă.

**Валентина ПЕТРОВА.**

# Карантин вĕçленнĕ

**Пăрачкавпа Улатăр районĕсенче Африка мурне пула йĕркеленĕ карантин вăхăчĕ пĕтнĕ.** Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев çакăн çинчен калакан документа иртнĕ эрне вĕçĕнче алă пуснă. Йышăнупа килĕшӳллĕн хăрушлăх кăларса тăратакан иккĕмĕш зонăри районсен шучĕ те чакнă. Халĕ унта Улатăр, Патăрьел, Вăрнар, Йĕпреç, Комсомольски, Пăрачкав, Çĕмĕрле, Шăмăршă тăрăхĕсем, Улатăрпа Çĕмĕрле хулисем кĕреççĕ.

Карантин тапхăрĕ вĕçленни сыхлăха çухатассине пĕлтермест. Ветеринарипе санитари правилисем çапла тума май памаççĕ. Чир алхаснă вырăнта, хăрушлăх кăларса тăратакан пĕрремĕш тата иккĕмĕш зонăсенче карантин хыççăн ултă уйăх хушши сыснана, ун ашĕнчен хатĕрленĕ çимĕçе иккĕмĕш зонăран аякка илсе тухма юрамасть (ирĕк илнĕ хуçалăхсемсĕр пуçне).

Пĕрремĕшпе иккĕмĕш зонăсенче çак тапхăрта сысна сутма (ирĕк илнĕ хуçалăхсен шута илмесен) та, ăна халăхран туянма та чару упранса юлать.

Малтанах чир алхаснă вырăнта тата пĕрремĕш зонăра хуçалăхсем карантин хыççăн çулталăк иртсен кăна витесене сысна илсе кĕме пултараççĕ. Унччен вĕсенче ытти йышши выльăх (сав шутра чăх-чĕп те) усрама юрать.

# Сĕт фестивалĕ

**Ыран Шупашкарта республикăра пиллĕкмĕш хут иртекен "Сĕт фестивалĕ" уçăлать.** Ăна халăхра сывă пурнăç йĕркине анлăрах сарас, сĕт продукчĕсемпе апатланас йăлана аталантарас, апат-çимĕç лавккисене паха сĕт продукцийĕпе пуянлатас тĕллевпе йĕркелеççĕ.

Фестивалĕн пĕрремĕш кунĕ парадпа пуçланать – республикăри сĕт тирпейлекен предприятисем хула урамĕпе утса тухаççĕ.

Шăматкун "Шупашкар – Арена" Пăр керменĕнче тĕрлĕ конкурс, ăсталăх класĕ иртĕç, сывлăх центрĕ ĕçлĕ, концерт курса, конькипе ярăнса килемме май пулĕ.

Унсăр пуçне хула çыннисемпе хăнасем республикăри предприятисем сĕнекен сĕте, унран хатĕрленĕ продукцие тутанса пăхма тата туянма пултараççĕ.

# Республика уй-хирĕнче

**Чăваш Республикин ял хуçалăх министрĕ Сергей Артамонов пĕлтернĕ тăрăх – районсенче вырма ĕçĕ вĕçленнĕ.**

Кăçал пĕтĕмпе 637,6 пин тонна тырă тĕшĕленĕ, çакă пĕлтĕрхи кăтартуран нумайрах. Кашни гектартан пуçтарса илнĕ вăтам тухăç та иртнĕ çулхинчен пысăкрах, 22,4 центнерпа танлашнă.

Çак эрне пуçламăшĕ тĕлне çĕрулмине республикăра 3,5 пин гектар çинчен кăларнă, хальлĕхе 64,7 пин тонна пуçтарнă (гектарти вăтам тухăç – 184,4 ц).

Юлашки вăхăтра çанталăк çумăра кайрĕ, анчах та унччен маларах кĕр тырри акассипе япăх мар ĕçленĕ. Пĕтĕмпе 92,5 пин гектара калчалантарнă. Унсăр пуçне 1,2 пин гектар çу паракан культурăсем акнă.

Хăмла ӳстерекен хуçалăхсем те "симĕс ылтăна" вăхăтра пуçтарса кĕртме тăрăшаççĕ. Тĕслĕхрен, Вăрнар районĕнчи "Агрохмель" пĕрлешӳре ăна 10 гектар çинче татнă. Пĕтĕмпе кунта хăмла пахчи 16 гектар йышăнать. Кăçал çулла шăрăх тăчĕ, апла пулин те кашни гектар вăтамран 12-15 ц тухăç парать.

Хăмла татас ĕçе хуçалăхра йăлт механизациленĕ.

# Шведсем ял хуçалăхĕпе кăсăкланнă

**Иртнĕ эрнекун ЧР ял хуçалăх министрĕ Сергей Артамонов шведсен делегацине йышăннă.**

Тĕлпулура вăл хăнасене республикăри агропромышленноç аталанăвĕн çул-йĕрĕпе, малашнехи майĕсемпе паллаштарнă. Инçетрен килнĕскерсене выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес, тĕштырă çитĕнтерес тытăмсенче инвестици проекчĕсемпе ĕçлесси кăсăклантарнă, унсăр пуçне хăмла туса илесси те. Ара, пирĕн патри çанталăк условийĕ "симĕс ылтăншăн" питĕ меллĕ. Раççей Ял хуçалăх министерстви те ку производствăна аталантарма пулăшать.

"KENNETH" компани представителĕсем республика ют çĕршыв инвестицийĕсене мĕнле йышăнни çинчен ыйтсан Сергей Артамонов Чăваш Ен Япони, Китай, çавăн пекех Швеци çĕршывĕсемпе пĕрлехи проектсене пурнăça кĕртсе пынине асăннă. Тĕслĕхрен, "Кеннет" пĕрлешӳ Çĕмĕрле районĕнче регистрациленнĕ. Кунта шведсем виççĕмĕш çул çерем çĕрсем уçса пĕрчĕллĕ культурăсем ӳстереççĕ. Паянхи кун тĕлне пĕрлешӳ республикăри икĕ районта 2 пин ытла гектар çинче ĕçлет. Çĕнĕ йышши техникăпа усă курса çитес çул гектарти тухăçа 60 центнера çитересшĕн.

ÇЫРĂНТАРУ – 2017

## «Хыпара» – кашни çемьене

**Авăн уйăхĕн 1-мĕшĕнчен – 30 % йӳнĕрех**

**2017 çулăн I çурринче илсе тăмашкăн**

***авăн уйăхĕн 1-мĕшĕнчен* йӳнĕ хакпа:**

**«ХЫПАРА» – 572,88 тенкĕпе, «ХЫПАР-эрнекуна» – 279,36 тенкĕпе, «ХРЕСЧЕН САССИНЕ» 250,08 тенкĕпе кашни çыхăну уйрăмĕнчех çырăнтараççĕ**

# Вырсарникун – «Нацисен кросĕ»

**Вырсарникун Пĕтĕм Раççейри пекех Чăваш Енре те "Нацисен кросĕ" иртет, кăçалхипе – вун виççĕмĕш хут.** Йĕркелӳçĕсем палăртнă тăрăх – районсемпе хуласенчи спорт мероприятине 60 пине яхăн çын хутшăнмалла.

Шупашкарти чупăва вара 15 пинрен кая мар тухмалла. Кунта пуçтарăнакансемшĕн старт Анне палăкĕ çывăхĕнче пуçланать (Мускав кĕперĕ çинче юсав ĕçĕ пынине пула).

Кросс çĕнтерӳçисене, призерĕсене яланхиллех медальпе, дипломпа, асăнмалăх парнепе чыслĕç. Чи кĕçĕн тата чи аслă чупуçăсене те хавхалантарĕç.

ЧУН ЫРАТĂВĔ

# Тĕрĕслĕхе ăçта шырамалла?

Иртнĕ çулхи çурла уйăхĕнче ĕне пăруларĕ. Тепĕр кунах вăл чирлерĕ. Эпĕ пулăшу ыйтса ветфельдшера телефонпа чĕнтĕм. «Çур литр эрехпе пĕр стакан тăвар ярса ĕçтер», – терĕ вăл. Ветеринар каланă пек турăмăр. Хăй вара кӳрши патне каçса Шăнкăртам тутарне: «Кунта клиент пур, часрах кил», – тесе телефонпа шăнкăравланă.

Фельдшера машинăпа кайса илтĕмĕр. Вăл ĕнене укол турĕ. Эмелшĕн 100 тенкĕ укçа илчĕ. Хырăмне шăтаратăп тесе ачаран çĕçĕ ыйтса илнĕ. Анчах хырăмне шăтармарĕ, артерине касса ячĕ. Эпир ку ĕçе тума хушман ăна. Шăпах çак вăхăт тĕлне Шăнкăртам тутарĕ те çитсе тăчĕ. Эпĕ çухалса кайрăм, ĕнене шеллесе йĕретĕп. Мĕн тумалла? Çитменнине каç та пулчĕ. Çапла 10 пинпе ĕнене илсе кайрĕç ултавçăсем. «Страхлав укçи тухать», – терĕç мана лăплантарса.

Фельдшер айăпа хăйĕнчен сиресшĕн халĕ: икĕ витре çĕрулми çитерсе чирлеттернĕ имĕш. Эпĕ ăна ĕнене пусма хушман-çке. Вăл укçа тăвас тĕллевпе çапла хăтланчĕ. Хăй справка памасть, пĕр пус укçа та илейместĕн тет.

Эпĕ çулсерен ĕнешĕн страхлав укçи тӳлесе пурăннă. Халĕ «Поддержка» страхлав компанийĕ панкрута тухнă теççĕ, вăл урăх ятлă имĕш. Агенчĕсем яланах: «Укçу халь-халь килет», – тесе йăпатрĕç. Анчах паян кун та илейместĕп ăна.

Эпĕ ĕнене 35 пине страхланă. Хăй хакне памасан та мĕн чухлĕ те пулин тӳлемелли саккун пурах пулĕ. Кашни эрнере кайса килетĕп унта. Мĕн чухлĕ укçа тăкакланать. «Ĕнӳ укçи çул çӳресех пĕтет. Пĕр пус та илейместĕн», – тет ветфельдшер.

Эпĕ çамрăк çын мар, 84 çулта. Аннерен 5 çулта тăлăха юлнă, аттерен 9-та. Вăл Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче вилнĕ. Ачалăхпа çамрăклăхăм йывăрпа иртрĕ. Халĕ те ырă курса пурăнма май çук. Ултавçăсен аллинчен епле хăтăлмалла?

Ĕне качака кăна мар вĕт. Вăл çемьене тăрантаракан та, тупăш тума пулăшакан та. Çавăнпа эпĕ ăна çулсеренех страхлама тăрăшрăм. Пирĕн инкек пулнă хыççăн тепĕр çынсен ĕни вилчĕ. Вĕсем страхлав укçи илчĕç. Маншăн саккун çук-шим? Тĕрĕслĕхе ăçта шырамалла-ши?

**Ольга ТРОФИМОВА.**
**Комсомольски районĕ,**
**Аслă Çĕрпӳел ялĕ.**

ÇЕМЬЕ

# Туслă, ĕçчен мăшăр



Çын ĕçпе илемлĕ. Вăл этеме савăнăç кӳрет. Манăн вулакансене пултарулă çынсемпе, Муркаш районĕнчи Актай ялĕнче пурăнакан Иванпа Ираида Беляевсемпе паллаштарас килет.

Иван Беляев – вăрçă ачи. Çак вăхăтри йывăрлăха чăтса ирттернĕ. Вăрман каснă, çурлапа тырă вырнă, уйхир сухаланă. Выçлăха та тӳснĕ.

Шкул пĕтернĕ хыççăн салтака кайнă, унтан тавăнсан шофера вĕреннĕ. Машина рульне пĕр улшăнмасăр 50 çул çирĕппĕн тытнă. Иван Иванович хăйĕн тивĕçне яланах тӳрĕ кăмăлпа пурнăçланă. Техникăна питĕ юратнă вăл. Çавăнпах ĕнтĕ ăна яланах юсавлă тытнă. Ăста, пысăк опытлă водитель çамрăксемшĕн ырă тĕслĕх пулса тăрать. Халĕ вăл тивĕçлĕ канура пулин те машина рульне алăран ямасть, çынсене те пулăшать.

Иван Иванович 50 çул каярах Тури Панкли хĕрĕпе Ираида Порфирьевнăпа çемье çавăрнă.

1962 çулта вăтам шкултан вĕренсе тухнă хыççăн хĕр пĕлĕвне Шупашкарти медицина училищинче малалла тăснă, шăл тухтăрĕн профессине алла илнĕ. Каярахпа Йӳçкасси больницинче ĕçе вырнаçнă. Унта вăл 42 çул тăрăшать. Çак вăхăтра миçе çынна пулăшу паман-ши? Эпĕ хам та ун патĕнче темиçе хутчен те шăла сипленĕ. Вăл чăтмалла мар ыратнă чух тухтăр Турă вырăнĕнчех-çке.

Ираида Порфирьевна кирек кама та пулăшу парать, хирĕçлемест. Йӳçкасси больницинче ытти тăрăхран та килеççĕ. Вăл район хаçачĕпе те çыхăну тытать. Шăла упрамалли пирки статьясем çырать.

Тепĕр чух ăшă сăмах, ырă кăмăл эмелрен те сиплĕрех. Ачасене те лăплантарма пĕлет вăл. Ахальтен мар ун пирки: «Кăмăлĕ те, алли те ылтăнран пулĕ», – теççĕ.

Иванпа Ираида Беляевсем пурнăç сукмакĕпе çур ĕмĕр пĕрле утаççĕ. Туслă мăшăр икĕ ача çуратса ӳстернĕ. Халĕ икĕ мăнукĕпе савăнаççĕ. Иккĕшĕ те – ĕç ветеранĕсем. Ĕçри хастарлăхшăн вĕсем Хисеп хучĕсемпе парнесем чылай тивĕçнĕ. Малашне те пĕр-пĕрне хисеплесе, килĕштерсе пурăнма Турă сывлăх патăр вĕсене.

**Илья ЯКОВЛЕВ.**
**Муркаш районĕ, Хурăнкасси ялĕ.**

ИКĔ ХЫПАР – ПĔР ТĂРĂХРАН

# Кĕтӳçĕ-ветеран

Алексей Углова Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Пукаш тăрăхĕнче çеç мар, Çĕрпӳ таврашĕнчи Тутайкассисемпе Елӳсем те аван астăваççĕ. Вăл ялсенче кĕтӳ кĕтсе ĕмĕрне ирттернĕ. Пĕр вăхăтра пурнăçран уйрăлас патнех çитнĕ. Ывăннăскер суха касси çинчех тĕлĕрсе кайнă. "ХТЗ" йышши хăватлă трактор рульне тытса пыракан ăна асăрхаманран хыçалтан çаклатнă сӳрепе урлах касса кайнă. Арçын хăрах куççăр юлнă, алли-ури те сусăрланнă. Юрать-ха, Октябрьски больницинче ăна лавпа вăхăтра илсе çитернĕ.

Паян çитмĕлрен иртнĕ ветеран-инвалид чаплă çуртра пурăнать. "Хресчен сасси" хаçат, "Тăван Атăл" журнал вулама юратать. Чун каниччен паллашсан вĕсене лавккана илсе пырать. "Тавар туянма килекенсем те вулаччăр", – тет.

Унăн ывăлĕсем те маттур. Николай – Шупашкарти налук службинче вăй хунă. Володя ял хуçалăх предприятийĕнче водительте ĕçлесе канăва тухнă. Юрий те водитель, анчах троллейбус рульне тытса пырать. Хĕрĕсем те пиччĕшĕ-шăллĕрен ӳксе юлмаççĕ.

# Турăшсен музейĕ тейĕн

Ялсенчи хăш-пĕр çурт музея аса илтерет. Шала кĕрсен пăхса тĕлĕнетĕн.

Акă Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Куснарти Владимир Элиановсен пӳртне ура ярса пуссан турăшсен куравне лекнĕнех туйăнать. Стена çинче мĕнли кăна çук?

Кӳршĕ ялти Кĕчкей чиркĕвĕнче вăй хунă пачăшкăсен сăнӳкерчĕкĕсене те рамăна вырнаçтарнă. Куснар чиркĕвĕпе çыхăннисем те сахал мар. Сăлтавĕ паллă – Элиановсен пĕтĕм йăхĕ тĕн ĕçне парăннă.

Шупашкар Сĕмĕлти кивĕ çуртсенче те тĕлĕнмелли тупăнать. Кунта çуралнă паллă ӳнерçĕ, график, нумай çул Шупашкарти ӳнер музейне ертсе пынă Орест Иванович Филиппов ĕçĕсем, кĕнекисем Абросеевсен патĕнче упранаççĕ. Çав шутра "Анне" портрет та.

**Анатолий ПУКАШ. Сĕнтĕрвăрри районĕ.**

ТАТУЛĂХ

# Тăван патне тăван пуçтарăнсан...

Тăван тăварпа писнĕ теççĕ халăхра. Атте-анне тăванĕсемпе тĕл пулсах тăратпăр. Май килнĕ таран пĕр-пĕрин патне хăнана çӳреме тăрăшатпăр. Акă Кулюк аппа хĕрĕсем Верăпа Маня хулана çитни çинчен пĕлтерсе шăнкăравларĕç. Ялти ĕçе пăрахса мăнукĕсене курма килнĕ вĕсем. Çав вăхăтрах пирĕнпе тĕл пулма та килĕшрĕç.

Тулли сĕтел хушшинче сăмах çăмхи сӳтĕлчĕ те сӳтĕлчĕ. Пĕртăвансен ачисем ăшшăн-ăшшăн калаçса хăналантăмăр: атте-анне пурнăçĕ, ачалăх, çамрăклăх куç умне тухрĕ.

«9 класс пĕтерсен ялти фермăна дояркăна вырнаçрăм, – аса илчĕ Вера пулни-иртнине. – 16 ĕне сăваттăм. Çуркунне Чĕмпĕр облаçне ирçе ялне стройкăна кайрăмăр. 65 метр тăршшĕ витене пиллĕкĕн 6 уйăх хушшинче купаласа, витсе пĕтертĕмĕр. Никĕсне чавнă чухне алă шыçрĕ. Стенине извеçпе шуратнă май пӳрне вĕçĕ шатрĕ. Хĕвелпе пĕрле ĕçе пуçăнаттăмăр, вăл ансан сывăрма таврăнаттăмăр. Пĕр майра патĕнче хваттерте пурăннă. Уйăхра 200-300 тенкĕ ĕçлесе илнĕ. Пусма тавраш туянса киле посылка ятăм. Анне мана валли качча кайма арча туяннăччĕ. Унăн тĕпне тимĕр укçа хунăччĕ. Çак пусмаран хĕр тупри пуçланнă».

Стройкăран килсен каллех ĕне сунă, сурăх пăхнă Вера. 1974 çулта ялти столовăйĕнче ĕçлеме тытăннă. Хăйĕн аппăшĕпе, Мария Груздевăпа, унта 20 çул тăрăшнă. «Ирхине 8 сехете вĕри апат, пин кукăль пĕçерсе хатĕрлеттĕмĕр. Ку вăхăт тĕлне Елчĕксем, вăрман касакантурттаракансем, апат çиме кĕретчĕç», – малалла сăмахларĕ Вера Ивановна.

1994 çулта столовăйне хупнă хыççăн 4 çул кочегарта ĕçленĕ, 9 çул çăкăр пĕçернĕ вăл.

Мăшăрĕпе виçĕ ача çитĕнтернĕ: Надя медицина училищи пĕтернĕ, Ваня – телемастер. Каярах водителе вĕреннĕ. Люба вара Чăваш патшалăх ял хуçалăх академийĕнче экономист-менеджер дипломне илнĕ. Халĕ Кузьминсен 6 мăнук. «Ĕмĕтленнĕ ĕмĕчĕсем çитсе пыччăр, шухăшланă шухăшĕсем пурнăçланччăр. Çемйисенче телей, килĕшӳ, ăнлану хуçалантăр, кил-çуртчĕсене усал ан кĕтĕр», – çапла пиллет Вера ачисене.

... Тепринче, яла Патăрьел районĕнчи Нăрваш Шăхальне кайсан, тăвансене хăнана телефонпа мар, ĕлĕкхилле кайсах чĕнсе килес терĕмĕр. Ваньăпа Вера патне пĕлтермесĕрех пырса кĕтĕмĕр мăшăрпа. Илемлĕ кил-çурт, çуллĕ хапха, пысăк хуçалăх, выльăхчĕрлĕх, сад-пахча... Мĕнле ĕçлесе çитереççĕ-ши? Пӳрт ăш-чикки хулари хваттертен пĕрре те кая мар.

Хуçасем пире ăшшăн кĕтсе илчĕç. Сĕтел тулли апат-çимĕç лартса сăйларĕç, кучченеç хутаççи тыттарчĕç. Шăкăл-шăкăл калаçса, юрласа утрăмăр савнă ял урамĕсемпе:

Çиччĕллĕ лампи çутă çутать,
Пиллĕкли пек мар иккен.
Хамăр тăван лайăх иккен,
Çичĕ ют пек мар иккен.

**Альбина МАКЕЕВА.**
**Шупашкар хули.**

*АСЛĂ ĂРУ*

# Йывăрлăхра пиçĕхни – ĕмĕре

**Çемйине усал тунă çыннăн хырăмĕ хăçан та пулин çурăлса каясса пĕлнĕ тейĕн Елчĕк районĕнчи Аслă Елчĕкре пурăнакан Леонид Петрович Бобинăн амăшĕ. "Тупăкри вилене масара илсе кайса пытарма хатĕрленнĕ. Сасартăках унăн хырăмĕ çурăлса кайнă. Тупăкран кăларса ӳтне çĕнĕрен тасатма тивнĕ", – пулни-иртнине аса илчĕ часах 90 çул тултаракан арçын.**

## Кăшкăрса макăрсан та илтмен

Чăннипе Леонид Петрович чылай çамрăкрах курăнать, хул-çурăмĕпе, сăн-пичĕпе кăна мар, ăс-тăнĕпе те. Ашшĕне репрессиленине кура нумай хура-шур тӳснĕскере пурнăç пиçĕхтернĕ.

Пĕчĕк ачисемпе нӳхрепре, çĕр пӳртре те пурăнма тивнĕ амăшĕ те 98 çула çитнине асăнчĕ Леонид Петрович. Империализм, Граждан, ун хыççăн Тăван çĕршывăн Аслă вăрçисен вут-çулăмĕ витĕр тухнă ашшĕ те 86-ра çут тĕнчерен уйрăлса кайнă.

Çынна ылханмалла мар, усал тума та юрамасть. Таса чуна кӳрентерни тупăкра та канăç памасть.

Аслă Бобинсен пуянлăх нумай та пулман темелле, ашшĕ ĕçлемен арман туяннă, ăна хута яма та ĕлкĕреймен. Паллах, ыттисем пекех çемье выльăхсăр пурăнман. Тахăшне темĕн килĕшмен, кил хуçине "халăх тăшманĕн" спискне кĕртнĕ. Юрать, пĕр ырă çын систернĕрен Леонид Петровичăн ашшĕ çакăн çинчен маларах пĕлет те ялтан тухса шăвăнать. Арестлеме килнисене амăшĕн хуравĕ çырлахтармасть. Мăшăрĕ ăçта тухса тарнине пĕлес тĕллевпе хĕрарăма кун сиктерсе ял Канашне чĕнтернĕ.

Çакăнпа кăна лăпланма шухăшламан вырăнти влаçра ларакансем. Пĕррехинче пӳрте виççĕн кĕрсе тăнине халĕ те астăвать ветеран. Пĕчĕкскер ирхине вăранма та ĕлкĕреймен. Килте çимелли юлман, "халăх тăшманĕн" çемйи тесе йăлт туртса илнĕ. Хутмалли вуттине, ĕнине, лашине, 3 кунхи пăрăвне те хăварман. Тăванĕсем çăнăх, çăкăр парса пулăшнă. Амăшĕ пур-çуккипе ачисене вĕри апат пĕçерсе çитерес тĕллевпе кăмака чĕртнĕ. Çакна курсан виççĕшĕнчен пĕри куркапа шыв ăсса илсе ăна сӳнтернĕ. "Тухăр", – тесе хĕрарăма ачисемпе пĕрле тăван çуртран хăвалама васканă. Урамра самай сивĕ çанталăк, шăнтнă. Ăçта каймалла мĕскĕнсен?! Амăшĕ алăри пепкипе кăшкăрса йĕнĕ.

## Нӳхрепри пурнăç

"Чул нӳхреп пурччĕ пирĕн, – тет ветеран. – Çавăнта пурăнма тытăнтăмăр. Анне йĕри-тавра çĕтĕк-çатăк сарчĕ, туалета тухма витре лартрĕ. Тăтăш тĕтĕм йăсăрланнăран ман сăмса хăрăмран тасалма пĕлместчĕ".

Шелленипе кӳршĕсем вĕсене хăйсем патне илнĕ. Малалла пурăнма çĕр пӳрт тума пуçланă. Ĕçе икĕ эрнере вĕçленĕ.

Инçетре тĕнче касса çӳреме тивнĕ ашшĕн çемйи çинчен шухăшламасăр кун иртмен. Таçта та çитнĕ вăл малтанах: Мускаври Хĕрлĕ площадьре çул сарнă, Донбасри завода лекнĕ, тинĕсре те пулнă. Юлашкинчен тăван тăрăха çывăхарах Хусанта тĕпленнĕ, спирт заводĕнче лашапа ĕçленĕ, унтан авиаци заводне тума хутшăннă. Тилхепене алăран яман, котлован чавнă хыççăн тăпра турттарнă.

"Пурăнмалла, малаллах талпăнмалла, йывăрлăха лекнĕ çемьене ялтан илсе тухмалла", – çапларах тĕллев лартнă вăл. Ара, пиччĕшĕпе вăрттăн çыхăну тытса килти лару-тăрăва пĕлсе тăнă. Кунĕн-çĕрĕн, тепĕр чух талăкĕпех ĕçленĕ. Йывăр килнĕрен малтанах ялтан аслă хĕрне илсе кайнă. Часах ăна Хусанта çĕр панă, вăл çурт туяннă, анчах пĕчĕк пулнăран çемье унта шăнăçайман. Ялти çĕр пӳртрех тата сакăр хĕл каçма тивнĕ.

## Арчара – сысна çури

1938 çулхи çĕртме уйăхĕн 8-мĕшне – ашшĕ хăйсене Аслă Елчĕкрен вăрласа тухнине – Леонид Бобин нихăçан та манаймĕ. Çывăхри тутар ялне çитиччен леçме пĕр "инхозпа" (хăйĕн хуçалăхĕпе кăна пурăннă çынна ĕлĕк çапла каланă) килĕшсе таталнă. Амăшĕ ывăлне тумланса выртма хушнă, пушмак кăна тăхăнтартман. Ара, çĕр варринче никам куриччен хăвăрт пуçтарăнмалла-çке. Илсе тухмалли выльăх та хатĕр: сысна çурине арчана хупнă, хур валли те вырăн тупнă. Тутар ялне çитеспе вĕсене ашшĕ лашапа кĕтсе илнĕ.

Çĕнĕ вырăнта çурт-йĕр çавăрнă пулсан та Хусанта ĕмĕр иртterме шухăшламан Бобинсем. 1942 çулта тĕппипех яла таврăннă. Унччен маларах тăван ене килкеленĕ. Ашшĕ ăратлă лашапа Йĕпреçрен пĕр вăхăт çăнăх та турттарнă. Вăрçă тухсан амăшĕ те окоп чавма çӳренĕ. Куçса килсенех çын патĕнче пурăннă, кайран саман (тăм) çурт лартнă. Хĕллесерен унта тутăр çыхса выртнине аса илчĕ Леонид Петрович. Йĕпе таракан нумайран хăлхана кĕре-кĕре кайнă.

Яла ашшĕ шăнкăрав çакнă лашапа пырса кĕнĕ. Тăван çĕршывăн Аслă вăрçине кайса ыттисем пекех тăшмана çапса аркатма хутшăннă. Хушнă ĕçрен пăрăнман, ӳркенмен. Ачисем те ашшĕпе амăшĕ пекех ĕçчен, ăслă-тăнлă ӳснĕ, нимĕнле лару-тăрура та çухалса кайман.

Аслисем Чăваш Ене куçса килнĕ ĕнтĕ. 14-ри Леонид вара Хусанта сутакан çуртшăн укçа илме юлнă. Каялла яла пĕччен таврăнмалла. Виçĕ кун килнĕ вăл тутарсен тĕп хулинчен. Вырăсла, чăвашла кăна мар, вĕсен чĕлхине те лайăх пĕлнĕрен çул çинчи ялсене çĕр каçма кĕнĕ. Çывăрма выртас умĕн ăна нускине хывма ыйтнă. "Ман ура тарламан, хывмастăп", – тесе хуравланă ача. Ара, ултă пин тенкĕ укçана унта пытарнă-çке. Çапла виçĕ кунран вăл тăван яла çитнĕ. "Тавралăха ыраш çăкăрĕн шăрши сарăлнăччĕ. Питĕ тутлăччĕ вăл", – аса илчĕ ветеран.

Амăшĕ ачине курсан савăнăç куççульне пытарайман. Çул çинче чылай вăхăт иртнĕрен ăна ырă-сывă кĕтсе илес шанăç та сӳнме пуçланă. Е укçине туртса илнĕ, е вĕлерме пултарнă тесе те шухăшланă.

## Арçын куççулĕ

Ашшĕ пекех тăрăшса вăй хунă Леонид Петрович ялта. Кӳлсе ĕçлеме вăкăр ӳстерсе самăртнă, анчах ăна курайман çынсем туртса илессипе хăратнă. Çавăнпа выльăха сутма шухăшланă, ун вырăнне пушмак пăру туяннă. Ăна та кӳлме вĕрентнĕ.

Килти хуçалăха çирĕплетмелле вĕт. Пĕррехинче вутă турттарма хуçалăхран лаша ыйтнă. Парас мар тĕллевпе сăлтав пайтах тупнă. Ун хыççăн та халăх тăшманĕн ачи тесе нумай тивĕçсĕр сăмах илтме тивнĕ. Пĕри ун çинчен тем те пĕр çырса суда хут янă. Юлашкинчен арçын тӳсеймен, ыр çын сĕннипе района çитнĕ. Хуйхи-суйхи çинчен каласа панă май пичĕ тăрăх куççуль шăпăртатса юхнă. Çакă пуçлăх чунне витернĕ пулас, çамрăк арçынна ăнланнă.

Апла пулин те ĕçчен çыннăн таса ятне тавăрма кайран та çăмăл килмен. Ура хуракан тупăнсах пынă. Ашшĕн пенсие тухма вăхăт çитсен те çапла пулнă-мĕн. Анчах Бобинсен йăхĕ çирĕп. Стаж çитменрен пенсие кăларма килĕшмесен ашшĕ ялтан ирĕксĕр тухса тарнă хыççăн ĕçлеме тӳр килнĕ вырăнсене çитнĕ. Мускавра Хĕрлĕ площадьре çул сарнине те ĕнентернĕ.

Çамрăк чух темĕнле йывăр пулсан та тракториста вĕреннĕ, унччен тĕрлĕ ĕçре вăй хунă. Леонид 30 çул шкулта ачасене çак транспортпа çӳреме хăнăхтарнă.

Леонид Петровичшăн паянхи пурнăç çăтмахри пек. Иртнине хальхипе танлаштарса хаклать йывăрлăхра пиçĕхнĕ çын. Аслă Елчĕкре Бобинсенчен чи асли вăл. Икĕ хĕрпе виçĕ ывăл пăхса çитĕнтернĕскер вĕсенчен пĕри çĕр çинче çирĕп тымар янăшăн савăнать. Сергей вунă çула яхăн ĕнтĕ фермер хуçалăхне тытса пырать, ĕнесем усрать. Вĕсен йышне çулсерен ӳстерме тăрăшать.

*СПОРТ*

# Ватлăхра физкультура пулăшать

Иртнĕ эрнере Сĕнтĕрвăрринчи "Мариинский" физкультурăпа спорт комплексне тивĕçлĕ канăва тухнă ветерансем пуçтарăнчĕç. Кунта Раççейри пенсионерсен союзĕ пуçарнипе иртекен "Аслă ăрăва чыс та мухтав" ятпа йăлана кĕнĕ уйăхлăх пуçланчĕ. Спартакиада савăнăçлă лару-тăрура уçăлчĕ. "О, спорт" юрă мероприятин гимнĕ пулса янăрарĕ, районти чи хастар спортсменсем "Раççей пенсионерĕсен союзĕ" общество организацийĕн официаллă ялавĕпе утса тухрĕç.

Палăртмалла, ăмăртăва Сĕнтĕрвăррисемпе тупăшма Çĕнĕ Шупашкарсем те килсе çитнĕ. Унта мĕнпурĕ 14 команда хутшăнчĕ. Вĕсем шывра ишессипе, дартс, теннисла выляссипе тата чупассипе вăй виçрĕç.

Арçынсенчен дартс вăйăйинче Кукашни ял тăрăхĕнчи Б. Марков, Сĕнтĕрвăрри хулинчи С. Крупнов, Сĕнтĕрпуçĕнчи В.Васильев палăрчĕç. Хĕрарăмсенчен хисеп пьедесталĕ çине Н. Мордашова (Кукашни ял тăрăхĕ), Т. Иванова (Сĕнтĕрпуç), С. Маклашкина (Карапаш) хăпарчĕç.

Теннисла выляссипе Çĕнĕ Шупашкарсене парăнтараканни тупăнмарĕ. Икĕ ушкăнра та пĕрремĕш вырăнсене вĕсем çĕнсе илчĕç. Иккĕмĕшпе виççĕмĕш вырăнсене арçынсенчен Сĕнтĕрвăрринчи М. Нестеровпа В. Кузьмин пайларĕç, хĕрарăмсенчен – Н. Яковлевăпа (Сĕнтĕрвăрри хули) М. Михайлова (Шуршăл).

Эстафетăра вара Шĕнерпуç тата Шуршăл ял тăрăхĕсен спортсменĕсем Çĕнĕ Шупашкарсене хыçа хăварчĕç.

Бассейнри ăмăртура Шуршăлсем (В. Михайловпа Е. Ильина) мала тухрĕç. Призерсен йышне Сĕнтĕрвăррипе Çĕнĕ Шупашкар пенсионерĕсем лекрĕç.



Ăмăрту çĕнтерӳçисем.

Сăнӳкерчĕке www.cap.ru сайтран илнĕ

**Кăларăма Ирина НИКИТИНА хатĕрленĕ.**

ЫЙТУ – ХУРАВ

# Пайласа тӳлеҫҫӗ

**Ялта пурӑнатпӑр. Эпӗ – педагог, арӑм та тивӗҫлӗ канура пулин те ачасене вӗрентет. 2016 ҫулччен эпир уйӑхсерен 1404,18 тенкӗ укҫа илсе тӑнӑ. Кӑҫал унӑн виҫи пӗчӗкленчӗ. Мӗншӗн?**

**Иван АНДРЕЕВ.**
**Куславкка районӗ.**

2016 ҫулхи кӑрлачӑн 11-мӗшӗнчен пуҫласа пурӑнмалли ҫурт-йӗршӗн, коммуналлӑ пулӑшушӑн тӳлемелли тӑкакӑн пайне саплаштарма Чӑваш Республикин саккунӗпе (2005 ҫулхи нарӑс уйӑхӗн 8-мӗшӗнче йышӑннӑскере 2015 ҫулхи раштавӑн 31-мӗшӗнче редакциленӗ) килӗшӳллӗн уйӑхсерен 1055 тенкӗ компенсаци параҫҫӗ. Анчах саккунӑн 5-мӗш статйипе килӗшӳллӗн ҫемьери ытти членсен те коммуналлӑ пулӑшу тӑкакне саплаштармашкӑн компенсаци илме ирӗк пулсан 1055 тенкӗне кашнин ҫине пайласа параҫҫӗ. Ҫемье членӗсен шутне упӑшкипе арӑмӗ, вӗсемпе пӗрле пурӑнакансем (ашшӗ-амӑшӗ, ачисем) кӗреҫҫӗ.

# Хӑҫан ҫуралнине шута илсе

**Сахал тупӑшлисен йышне кӗмен виҫӗ ачаллӑ ҫемье республикӑри амӑшӗн капиталне илме пултарать-и?**

**Светлана ВАСИЛЬЕВА.**
**Йӗпреҫ районӗ.**

ЧР Ӗҫлев тата социаллӑ хӳтлӗх министерстви пӗлтернӗ тӑрӑх – 2016 ҫулхи кӑрлач уйӑхӗн 11-мӗшӗнче вӑя кӗнӗ саккунпа Чӑваш Республикин уйрӑм саккун акчӗсене улшӑнусем кӗртнӗ. Вӗсем республикӑри амӑшӗн капиталӗпе усӑ курас йӗркене те пырса тивеҫҫӗ.

Республикӑри амӑшӗн капиталне ЧР Министрсен Кабинечӗ ҫирӗплетнӗ пурӑнма кирлӗ чи пӗчӗк виҫерен сахал тупӑш (капиталпа усӑ курма заявлени панӑ вӑхӑт тӗлне) илекен ҫемье тивӗҫет. Ҫавӑнпа ачана 2016 ҫулхи кӑрлач уйӑхӗн 11-мӗшӗ хыҫҫӑн ҫуратнисен (усрава илнисен) заявлени парас умӗнхи 6 уйӑхшӑн ҫемье тупӑшне кӑтартакан документ тӑратмалла.

# Инвалид ачаллӑ ҫемьене тивекен ҫӑмӑллӑхсем

- 50 ҫул тултарсан инвалид ача амӑшне пенси тӳлеҫҫӗ, анчах ача 8 ҫул тултарман тата амӑшӗн ӗҫ стажӗ 15 ҫултан сахал мар пулсан.
- Пӗрлехи ӗҫ стажне сусӑр ачана пӑхма кирлӗ вӑхӑта кӗртеҫҫӗ, анчах та кун пек пӑхассине сиплев учрежденийӗ ҫырса палӑртнӑ пулсан кӑна.
- Сусӑр ача тата ӑна илсе ҫӳрекен пӗр ҫын хула транспорчӗпе (таксисӗр пуҫне) тӳлевсӗр усӑ курма пултараҫҫӗ.
- Инвалид ачаллӑ ҫемьене хваттершӗн (енчен те вӑл патшалӑхӑн е муниципалитетӑн чухне) тӳлемелли виҫен 50 процентне субсидилесе пулӑшаҫҫӗ. Унсӑр пуҫне телефонпа, радиопа усӑ курнӑшӑн та ҫурри таран компенсацилеҫҫӗ.
- Ӗҫлев саккунӗсемпе килӗшӳллӗн инвалид ачана пӑхакан ӗҫлекен амӑшне е опекуна та ҫӑмӑллӑхсем тивеҫҫӗ.

ПАХЧАҪӐ

# Гладиолус шӑлне – чӑлхана



Авӑн уйӑхӗн пуҫламӑшӗнче гладиолус чечекӗсене касмалла. Тепӗр икӗ эрнерен тымарне чавса кӑлармалла. Пӑтраштарас темесен кашни сорта капрон чӑлха ӑшне уйрӑм хумалла. Ун хыҫҫӑн шывра ҫумалла, карбофос (унӑн концентрацине инструкцире кӑтартнинчен икӗ хут ӳстермелле) шӗвекне ямалла. 15 минут иртсен кӑлармалла та чӑлхапах ҫутӑ хӗрлӗ марганцовка шӗвекне ямалла (15 минута). Унтан ӳсен-тӑран шӑлне чӑлхаран кӑлармалла, ҫӗр ҫийӗн ӳсекен пайне 4-6 см хӑварса касмалла, сарса хумалла. 22-25 градусра 20 кун типӗтмелле. Ҫакӑн хыҫҫӑн тымарӑн кивӗ шӑлӗ ҫӗннинчен ҫӑмӑллӑн уйрӑлать. Хуппине тасатмалла, мӗншӗн тесен ун айӗнче хурт ҫӑмарти упранма пултарать. Хӗлле личинка мӗнпур сӗткене ӗмсе илнӗрен вӑл типет.

Гладиолус шӑлӗсене икӗ хутлӑ хура капрон чӑлхара упрасан аван. Пӗчӗк шӑлсемпе пӗрле сорт ятне палӑртнӑ хут чикмелле, пысӑк температурӑран пулӑшакан кирек мӗнле эмеле вӗтетсе ҫиелтен сапмалла, чӑлхана ҫыхмалла.



## Каюра аптратсан

– Каюра шӑтӑкне качака е сысна каяшӗпе тултармалла. Унсӑр пуҫне селедка пулӑ шывне е шывпа хутӑштарнӑ краҫҫын тӑкмалла.

– Йӗплӗ хурлӑхан туратне вӗтетмелле, тислӗкпе пӗрле ҫӗре чавса хумалла.

– Ҫӗмӗрт шалчисем чиксе тухмалла.

– Металран тунӑ ҫаврӑнакан япаласен шавӗ каюрана хӑратать.

– Ҫак чӗрчун суханпа ыхра шӑршине юратмасть. Ҫавӑнпа вӗсене касса каюра ҫулӗ ҫине хумалла.

## Кирпӗч пулӑшать

**Кӗркунне пахчана тасатмалла, унта пуҫтарӑннӑ ҫӳп-ҫапа ҫунтармалла. Анчах нӳрӗ ӳсен-тӑран ҫунасшӑнах мар. Кун пек чух кирпӗч пулӑшать.**

Малтанах ӑна типӗ вырӑна илсе хумалла. Типсе ҫитсен виҫӗ сехете краҫҫына ямалла. Унтан кӑларса полиэтилен пленкӑпа чӗркемелле. Ҫапла вӑл шӑршӑпа сывлӑша варалامасть. Унсӑр пуҫне ҫунас хӑвачӗ вӑрахрах упранать.

Ҫӳп-ҫап ҫунтармалла чух ӑна купа ӑшне хураҫҫӗ те чӗртсе яраҫҫӗ. Капла чылайччен тата пӗр пек ҫунать. Ҫулӑма сӳнтерме кирпӗче патакпа туртса кӑлараҫҫӗ те хулӑн йӗпе ҫӗтӗкпе витеҫҫӗ.

## Ҫуркуннеччененех йӑран ҫинче

Кишӗре ҫуркуннеччен тата мӗнле майпа упрамалла тетӗр-и? Пӗр йӑрана ан кӑларӑр, ҫаплипех хӑварӑр. Асӑрханса ҫулҫине иртӗр, йӑран ҫине ал тупанӗ хулӑнӑш тӑпра хурӑр. Ҫуркунне ӑна сирӗр те кишӗре чавса кӑларӑр. Вӑл кӗркуннехи пекех тутлӑ та сӗткенлӗ пулӗ.

## Упрама хуриччен сивӗтмелле



Ҫанталӑк пӗрремӗш хут шӑнтсан кишӗре упрама хумашкӑн йӑран ҫинчен кӑлармалла. Калӑпӑр, тымар ҫимӗҫе пуҫтарма вӑхӑт, ҫанталӑк вара ӑшӑ. Кун пек чух кишӗре пӗр е икӗ талӑк сивӗре тытмалла (упрама хуриччен ӑна яланах сивӗтмелле), унсӑрӑн кайран шӑтма пуҫлать.

ВЫЛЬӐХ-ЧӖРЛӖХ

# Апат ҫитерсен те ӳсмест

**? Ҫамрӑк чӑхсене апат ытларах та ытларах ҫитеретӗп, анчах самӑрӑлни палӑрмасть. Аслӑраххисем те ҫӑмарта сахал тума тытӑнчӗҫ. Пӗр-пӗр чирпе чирлемерӗҫ-ши?**

**Мария СКВОРЦОВА. Йӗпреҫ районӗ.**

Куҫпа курмасӑр чӑх чирӗн диагнозне палӑртма йывӑр. Анчах кил хуҫи хӗрарӑмӗн кокцидиоз чирӗ те ҫапла пуҫланма пултарнине тавҫӑрмалла. Ӑна тӳрех пӗлме кӑткӑс, ҫавна пула ял ҫынни нумай ҫухату тӳсет. Чир пуҫламӑшӗнче чӑх сывӑ чухнехи пекех ҫӳрет. Кайран майӗпен тухӑҫлӑхӗ чакать (эсир асӑннӑ пек нумай ҫиет, анчах ӳт хушмасть, ҫӑмарта сахал тӑвать тата ытти те).

Чир самаях аптратсан куҫне хупса, пуҫне пӗксе тӑрать. Апат патне сайра пырать е пачах ҫиме пӑрахать, тӗкӗ тӑртанса тӑрать. Ытларах чухне чӗкӗрет, юн тухни те пулать. Ҫапла 3-4 кун ҫӳресен чӑх вилет.



Пуснӑ хыҫҫӑн вар-хырӑмлӑхӗ тӑрӑх вӑл чӑннипех чирлине пӗлме пулать. Кокцидиоз чухне кайӑк тушки кӑвакрах тӗслӗ, пыршӑлӑхӗ тулли. Пӗсехи пушаннӑ, ытларах чухне хӑпарӑнса тӑрать.

Чир паллисене асӑрхасанах ветеринара чӗнмелле. Тӗрӗс диагноз лартсан унӑн мӗнпур хушӑвне, сӗнӗвне пурнӑҫламалла, унсӑрӑн чӑх йывӑрӑшӗ 30-70 процент чакать, чӗпсен 30 проценчӗ вилет. Чир ыттисене ерме пултарать. Унсӑр пуҫне ҫакнашкал чӑх 1-2 уйӑх ҫӑмарта тумасть.

Вӑл савӑт-сапа, ай сарӑм, таса мар шывпа апат урлӑ чире каять. Уйрӑмах ӑшӑ ҫумӑрлӑ ҫанталӑкра вӑл хӑвӑрт аталанать. Чире пуҫаракан кокциди 1-4 кунра "пиҫсе" ҫитет. Пӗр апатран тепӗр тӗрли ҫине куҫарни, ытлашшипех хӑрани те ӑна аталанма май парать. Вӑл питӗ чӑтӑмлӑ, сивӗ ҫанталӑкра пӗтерме йывӑр. Витене типӗтни, савӑт-сапапа хатӗр-хӗтӗре, стенана ҫунтарса хӗртни (асӑрханулла пулмалла) унран хӑпма пулӑшать. Ҫавӑнпа ай сарӑм яланах типӗ пулмалла.

Дезинфекцилемелли ансат шӗвексемпе кокцидие пӗтерейместӗн, ӑна аталанма чаракан хими препарачӗсемпе (кокцидиостатиксем) усӑ курмалла. Вӗсене апатпа пӗрле памалла.

**Владимир ВЫСЛОВ.**



## Ҫӑмарта хуппипе

Вулакансене пӗр сӑнавпа паллаштарас килчӗ. Хамран тӗслӗх илме сӗнместӗп, анчах хальччен туман эксперимент тӗлӗнтерчӗ.

Виҫӗ ҫул каялла ӗне туянтӑм. Ыттисенчен нимӗнпе те уйрӑлса тӑмастчӗ, анчах хуҫи ӑна питӗ хаклӑ сутрӗ. Мӑшӑр туянма хирӗҫ пулчӗ, эпӗ унпа килӗшмерӗм. Икӗ хут кӑна пӑруланӑран ун чухне сӗт ытла нумай памастчӗ (9-10 литр).

Туяннӑ ҫулах пире пӑрупа савӑнтарчӗ. Ҫамрӑкскер пӗр чирлемесӗр ӳсрӗ. Сӗтпе пӗрле ирсерен тата каҫсерен пӗрер ҫӑмарта ватса хуппипех патӑм. Ӑна, ҫӑкӑр татӑкӗ янӑ сӗте, питӗ кӑмӑлларӗ. Выльӑх мӗнле ӳснине те сисмерӗмӗр. Кӳршӗре пирӗннипе пӗр вӑхӑтра пӑруланӑ пӑру пурччӗ. Вӑл та сӗтпе ӳснӗ, анчах пирӗннинчен икӗ хут пӗчӗкрех. Кӳрше апата ҫӑмарта хуппи хушни ҫинчен каларӑм, вӑл ӗненмерӗ.

Вун пӗр уйӑх тӗлне пӑру икӗ ҫулти ӗне пек пулчӗ.

**Светлана СОРОКИНА.**

ТĔПЕЛ

## Çĕрулми запеканки

*Кирлĕ пулать: 6 çĕрулми, 2 çăмарта, 2 шăл ыхра, 3-4 апат кашăкĕ майонез, 100 г сыр, тăвар, укроп.*

Сыра, ыхрана вĕтĕ теркăпа хырмалла. Сырăн пĕр пайне 1 çăмартапа, укроппа хутăштармалла.

Çĕрулмине шултра теркăпа хырмалла, пăрăç, тăвар, 1 çăмарта, ыхра, майонез, юлашки сыра ярса пăтратмалла, формăна ямалла. Çиеле – сыр, çăмарта тата укроп хутăшне. 180 градус вĕрилентернĕ духовкăна лартмалла, 40 минут пĕçермелле.

## Помидорпа, сырпа

*Кирлĕ пулать: 300 г помидор, 1-2 шăл ыхра, 300 г тĕтĕмленĕ кăлпасси, 200 г сыр, 200 г майонез.*

Помидора, сыра, кăлпассие улăм пĕрчи евĕр турамалла, ыхрана вĕтетмелле. Пурне те хутăштармалла, майонез ярса пăтратмалла.

## «Анкл Бенс» салат

*Кирлĕ пулать: 500 г кабачок, 1 пуç сухан, 1 кишĕр, 2-3 пылак пăрăç, 250-300 г помидор, 75 г томат пасти, 65-70 мл тип çу, 0,5-1 апат кашăкĕ тăвар, 50 г сахăр, 200 мл шыв, 1 чей кашăкĕ вĕтетнĕ калемпĕр, 15-20 мл уксус (9 процентлă).*

Томат пастине, шыва, тип çăва, тăвара, сахăра хутăштармалла, çулăм çинче 5 минут тытмалла. Томат соусĕ хатĕр.

Кабачока, пылак пăрăçа – пысăках мар касăкпа, помидорпа сухана çурма çаврашкан турамалла, кишĕре теркăпа хырмалла.

Кабачока томат соусне ямалла, вăтам çулăм çинче 15-20 минут пĕçермелле, сухан, кишĕр тата пылак пăрăç хушсан тепĕр 15 минут вĕретмелле. Помидора юлашкинчен ямалла, пăтратмалла, каллех 15 минут пĕçермелле, уксус, сахăр, тăвар, калемпĕр хушмалла.

Салата стерилизациленĕ банкăсене вĕрилле тултармалла, хупмалла, кутăн çаврăрса лартмалла, ăшă япалапа витмелле.

## Усăллă сĕнӳсем

● Атă-пушмак тасатмалли крем хытрĕ пулсан ăна темиçе тумлам скипидар ярса çемçетмелле. Вăл çук чухне сĕт те юрăхлă.

● Çупа вараланнă атă-пушмака апат-çимĕç соди янă хутăшпа (1 стакан шыва 1 чей кашăкĕ) çуса тасатăр.

● Пиртен çĕленĕ пушмак нашатырь спирчĕ (1 стакан шыва 1 чей кашăкĕ) янă супăньлĕ шывра çусан аван тасалать.

● 2-3 тумлам уксус янă шывра пĕçерсен çĕрулми саланмасть.

● Пăсăлма пуçланă аша уксус янă шывра чӳхемелле. Аш пĕçерме юрăхлă пулать.

● Пĕçернĕ чухне хĕрлĕ кăшман тĕсĕ улшăнасран шыва 2-3 тумлам уксус ямалла.

● Туранă панулмие пĕçериччен кăшт кăна тăвар хушнă шывра тытăр. Кун пек тусан вăл тĕксĕмленмĕ.




ЮРАТНĂ ЮРĂ

***Наци радиовĕне илемлĕ юрă итлерĕм. Ăна пĕртăван Малинасем юрлаççĕ. Унти хăш-пĕр сăмаха çеç астуса юлтăм: «Нумай çулсем иртрĕç, чылай шыв-шур юхрĕ...» Çак юрра хаçатра пичетлесен питĕ савăннă пулăттăм. Ăна итленĕ май анне сăнарĕ куç умне тухрĕ.***

***Людмила АЙДАК.***
***Етĕрне районĕ, Тури Ачак ялĕ.***

## Анне пехилĕ

*Сăввине те, кĕввине те Ирина Угаслова-Малина çырнă*

1\. Анне санăн сăнару
Ялан тăрать куç умĕнче.
Анне сан лăпкă сассу
Илтĕнет шăппăн тĕлĕкре.
**Хушса юрламалли:**
**Нумай çулсем иртрĕç,**
**Чылай шыв-шур юхрĕ.**
**Анчах анне сăнарĕ,**
**Çаплах куç умĕнче.** } 2 хут

2\. Эсĕ пире вĕрентрĕн
Пĕртăвансем туслă пулма.
Туслăх ан пĕттĕр терĕн
Хăвăр çитĕннĕ кил-çуртра.
**Хушса юрламалли:**
**Эсир пĕр варта выртнă,**
**Пĕр кăкăр сĕчĕ çинĕ.**
**Вăй-хăват сирĕн туслăхра,**
**Ăна упрамалла.** } 2 хут

3\. Анне пире пиллерĕн
Мăшăр çунат, вăрăм кун-çул.
Телейлĕ пулăр терĕн,
Ан сӳнтĕр сирĕн вучаху.
**Хушса юрламалли:**
**Сан мăнукусем ӳсрĕç,**
**Хăйсем ачаллă пулчĕç.**
**Пĕчĕкçĕ мăнукăмра**
**Куратпăр сан сăнна.** } 2 хут

ЧИРКӲ ЙĂЛИ-ЙĔРКИ

## Турă Амăшĕ çуралнă кун

Авăн уйăхĕн 21-мĕшĕнче – Турă Амăшĕ çуралнă кун. Вăл Аннăпа Иоаким çемйинче кун çути курнă. Вĕсем чылай çул пĕрле пурăннă, анчах кил-çуртра ача сасси илтĕнмен. Мария çурални çĕр çинче те, пĕлĕтре те пысăк савăнăç пулнă.

Çак куна авалтанах уявланă. Аслисем çамрăк мăшăр патне хăнана кайнă. Лешсем вĕсене тутлă апатçимĕçпе сăйланă. Турă Амăшĕ çуралнă кун ĕçлеме юрамасть. Çавăн пекех харкашма та. Сăраэрехпе иртĕхни те çылăх шутланать.

Ку вăхăт тĕлне аслă ăру тырпула пуçтарса кĕртнĕ. Çавна май тухăçпа савăнса уяв ирттернĕ, пĕрпĕрин патне хăнана çӳренĕ. Сăра сакки сарлака тенĕ евĕр вăл икĕ эрне тăсăлни те пулнă.

Çăл шывĕпе çăвăнакан тата ăна ĕçекен сипленет тенĕ.

Авăн уйăхĕн 21-мĕшĕнчен çанталăк сивĕтме тытăннине, ăшă кунсем хыçала юлнине палăртнă. Çавăнпа та утарти ĕçсене вĕçленĕ, вĕллесене хĕле хатĕрлеме тытăннă.



СĂНАВСЕМ

✓Турă Амăшĕ çуралнă кун хĕвеллĕ пулсан юпа уйăхĕн вĕçĕччěнех çавнашкал уяр çанталăк тăрĕ.

✓Таврана тĕтре карса илчĕ пулсан – çумăра кĕт.

✓Ирхине çумăр çусан – хĕл сивĕ килессе. Çак кунхи çумăр 40 куна тăсăлĕ.

✓Сывлăм хăвăрт типсен хĕлле юр сахал пулĕ.

✓Турă Амăшĕ çуралнă кунран «карчăк ăшши» («бабье лето») пуçланать тенĕ халăхра.

✓Çак кун кĕркуннене чысласçĕ, çу кунĕсем пĕтеççĕ.

ТĔЛĔКСЕМ

Алран лаша тарни – ырă пурнăç тарасса.

Кăвак лаша – чухăн каччăпа пĕрлешессе.

Тур лаша – пуян каччăпа пĕрлешессе.

Хура лаша – хуйха.

Шурă лаша – ыр хыпара.

Макăрни – савăнасса.

Масар – чир-чĕртен сываласса.

Мăйăр – куççуле.

Милĕк касни – кулянăва.

Минтер – телее.

Мулкач – çухатăва.

Вĕри мунча – инкеке.

Панулми – чире.

СЫВЛĂХ



## Хĕп-хĕрлĕ палан

**Вăл иммунитета çирĕплетет. Паланран хатĕрленĕ препаратсем ыратнине ирттереççĕ, юн кайнине, тĕртĕмсем туртăнса хутланнине чараççĕ, сурана тӳрлетеççĕ, вируссемпе микробсене пĕтереççĕ. Çавăн пекех вăл шăк хăвалама, тар кăларма пулăшать.**

**Иммунитета çирĕплетме.** 1-ер стакан пыл, палан çырлин нимĕрне илмелле, хутăштармалла, холодильникра упрамалла. 1 стакан чее 2-3 апат кашăкĕ çак хутăша ярса кунне икĕ хутчен ĕçмелле. Курс – 2 эрне.

**Аллергирен.** Тин вĕренĕ 1 стакан шыва 2 апат кашăкĕ палан йывăçĕн вĕтетнĕ хуппине ямалла, пĕр-пĕр япалапа хупламалла, 1 сехет тытмалла, сăрăхтармалла. Кунне тăватă хутчен апат умĕн 1-ер апат кашăкĕ ĕçмелле. Курс – 3 кун.

## Сиплевçĕ йĕкел

**Историксем палăртнă тăрăх – славянсем çăкăра чи малтан юман йĕкелĕнчен пĕçернĕ. Ахальтен мар çапла тунă вĕсем. Йĕкелти кверцетин, крахмал тата ытти усăллă япала хырăмлăха тасатнине тĕпчесе пĕлнĕ хальхи ăсчахсем.**

Унсăр пуçне йĕкел шĕвекĕ бактерие пĕтерме, ыратнине ирттерме пулăшать.

**Шăк хăмпи шыççан (цистит).** Тин вĕренĕ 1 стакан шыва 1 апат кашăкĕ вĕтетнĕ юман йĕкелĕ ямалла, вĕретмелле, çулăм çинчен илмелле, 1 сехет тăрăлтармалла, сăрăхтармалла. Кунне виçĕ хутчен апат умĕн 30 минут маларах 1/4 стакан ĕçмелле.

**Варвиттирен.** Тин вĕренĕ 1 стакан шыва 2 чей кашăкĕ вĕтетнĕ юман йĕкелĕ ямалла, çулăм çине лартса вĕретмелле, савăта хупласа 2 сехет тăрăлтармалла, сăрăхтармалла. Кунне икĕ хутчен апат умĕн çур сехет маларах çуршар стакан ĕçмелле.

Юман йĕкелĕнчен хатĕрленĕ маçпа **ӳт шăтсан тата ăна пĕçертсен** усă кураççĕ. Кунне икĕ хутчен сĕрмелле. Ăна çапла хатĕрлемелле: йĕкеле хуппинчен тасатмалла, аш арманĕпе вĕтетмелле, тасатнă тип çу ямалла, 3 эрне тытмалла, вăхăт-вăхăтпа силлесе илмелле, сăрăхтармалла.



*Асăрхаттарни: халăх сĕнекен сывату меслечĕсемпе усă куриччен тухтăрпа канашласа пăхмалла.*

УЙĂХ КАЛЕНДАРĔ

| Число, кун | | Авăн, 22 – кĕçнерникун | Авăн, 23 – эрнекун | Авăн, 24 – шăматкун | Авăн, 25 – вырсарникун | Авăн, 26 – тунтикун | Авăн, 27 – ытларикун | Авăн, 28 – юнкун |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| ХĔВЕЛ | тухать | 5.37 | 5.39 | 5.41 | 5.42 | 5.44 | 5.46 | 5.48 |
| | анать | 17.49 | 17.47 | 17.44 | 17.41 | 17.39 | 17.36 | 17.33 |
| Кун тăршшĕ | | 12.12 | 12.08 | 12.03 | 11.59 | 11.55 | 11.50 | 11.45 |
| УЙĂХ | тăхри | катăлса пырать | катăлса пырать | катăлса пырать | катăлса пырать | катăлса пырать | катăлса пырать | катăлса пырать |
| | кунĕ | 21-мĕш кун | 22-мĕш кун | 23-мĕш кун | 24-мĕш кун | 25-мĕш кун | 26-мĕш кун | 27-мĕш кун |
| | | Йĕкĕреш паллинче | Рак паллинче | Рак паллинче | Рак паллинче | Арăслан паллинче | Арăслан паллинче | Хĕр паллинче |

# Хĕрĕх тĕрлĕ ĕç тума та ал çитет

ЯТ-СУМ

«Вĕрентекенĕн ыттисенчен уйрăмрах, палăрса тăракан çын пулмалла», – тенĕ Геннадий Волков ăсчах. Елчĕк районĕнчи Тăрăмра пурăнакан Людмила Енедеровăпа Венера Петрова шăпах çакнашкал çынсем. Ял хастарĕсем вĕсем. Ĕнерхи вĕрентекенсем паян тивĕçлĕ канура пулсан та общество ĕçĕнчен пăрăнмаççĕ. Унсăр пуçне картиш тулли выльăх-чĕрлĕх усраççĕ, чечексем çитĕнтереççĕ, чылай хаçат-журнал çырăнса илеççĕ. «Алмантай» фольклор ушкăнне çӳреме те вăхăт тупаççĕ.

Людмила Аркадьевна 32 çул Тăрăмри шкулта ачасене чăваш чĕлхипе литературине вĕрентнĕ. Венера Георгиевна вара – вырăс чĕлхипе литературине. Çавăнпа та кун-çул уттинчен юласшăн мар вĕсем. Хаçат-журнал çырăнса илнисĕр пуçне кирлĕ сĕнӳсене, усăллă канашсене пуçтарса хураççĕ. Ара, кил тĕрĕшре вĕсем яланах кирлĕ. Людмила Енедерова вара район хаçачĕпе те çыхăну тытать.

Иккĕшĕ те мăшăрĕсемпе ывăл-хĕр çуратса ӳстернĕ. Вĕсем тăван йăваран вĕçсе тухса саланнă. Çапах та ачисене пулăшас тĕллевпе пахчаçимĕç ытларах акса туса илес, выльăх-чĕрлĕх чылай усрас тесе пурăнаççĕ маттур хĕрарăмсем. Ара, амăшĕ яланах тĕпренчĕкĕсем пирки шухăшлать-çке. «Выльăх усраса алă çавăрма тăрăшатпăр. Пахчаçимĕç те чылай çитĕнтеретпĕр, хамăр валли çеç мар, сутмалăх та пур. Шел, йӳнĕ хакпа пама тивет», – пăшăрханăвне пытармарĕ Людмила Аркадьевна.


Людмила Енедеровăпа Венера Петрова.

Ку шухăшпа Венера Георгиевна те килĕшрĕ. «Выльăх-чĕрлĕх тытма çăмăл мар. Утă-улăм хатĕрлемелле, тырă та чылай кирлĕ. Тепĕр чух вĕсене туянма та тивет. Килти хуçалăх ытларах хĕрарăм çине тиенет. Мăшăр механизатор пулнă май иртен пуçласа сĕм çĕрлеччен колхозра тăрăшать. Юрать, пысăк ĕçсене пурнăçлама хĕрсем, тăвансем пулăшаççĕ», – калаçăва хутшăнчĕ вăл. Сăмах май, иккĕшĕ те икшер ĕне тытаççĕ.

Хĕрарăмсем илем тĕнчисĕр пурăнаймаççĕ. Пахчара та, пӳлĕмре те – чечексем. Тепĕр чух пĕр-пĕринпе канашласси, хунавсене улăштарасси те пулать. Унсăр пуçне вĕсем – алĕç ăстисем те. Фольклор ушкăнне çӳренĕ май хушпу-тухьяна хăйсемех ăсталаççĕ. Евдокия Каширина ертӳçĕ тăрăшнипе вырăнти юрра-кĕвве шăрантарать ушкăн. Йăла-йĕркене те манăçа кăлармаççĕ.

Ялти общество ĕçĕнчен пăрăнмаççĕ ĕнерхи вĕрентекенсем. Людмила Аркадьевна – Тăрăмри депутатсен пухăвĕн председателĕ, Венера Георгиевна – вырăнти хĕрарăмсен канашĕн ертӳçи. Субботникирттермелле е ялта, районта ăмăртăва хутшăнмалла – нихăçан та хирĕçлемеççĕ. Ял-йыша хăйсем йĕркелесе ертсе пыма тăрăшаççĕ. Апла пулсан вĕрентекен ятне ямаççĕ. Кăçал акă халăх ял масарне тирпей-илем кӳнĕ. Пысăк йывăçсене каснă, карта тытса çавăрнă, ун айккипе чăрăш, хыр хунавĕсем лартнă. Сăваплă ĕç тунă. Çакнашкал ырă ĕç-пуç этем чĕрине савăнтаратех. Ахальтен мар ун пирки хĕпĕртесе пĕлтерчĕç хĕрарăмсем. «Халăх ура тапсан – çĕре кисрентерет, вĕрсен – çил-тăвăл кăларать», – терĕç вĕсем ытарлăн.

Хăйсен вĕренекенĕсемпе мухтанаççĕ вĕсем. Унта-кунта тĕл пулсан та сывлăх сунмасăр иртмест çамрăк ăру. Вĕрентекенĕн ырă ятне çӳлте тытма тăрăшаççĕ. Геннадий Никандрович калашле ытти çынран чăннипех уйрăлса тăраççĕ. Çавăнпах вĕсене ял-йыш та хисеплет.

# Ăс патăр ватти, вăй патăр яшши

МАТТУР!

Ял пуласлăхĕ – çамрăкра. Йĕпреç районĕнчи Кĕлĕмкассинче маттур, хастар, чипер Мария Петровăпа паллашма май килнишĕн савăнтăм. Вăл – ялта культура мероприятисене йĕркелекенĕ. Унсăр пуçне «Раççейри ял çамрăкĕсен пĕрлĕхĕ» общество организацийĕн Йĕпреç районĕнчи уйрăмĕн ертӳçи те.

